26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944
ФЕВРАЛЬ
25
ЭРНЕКУН
39(6534) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Арми генералне ПОПОВА
Арми генералне ГОВОРОВА

БАЛТИКА ÇУМĔНЧИ 2-мĕш фронт çарĕсем, Ленинград фрончĕн çарĕсем тӳррĕнех пулăшнипе, вăрманлă, шурлăхлă вырăнсен йывăр условийĕсенчи наступление вăйлатса пырса, паян, февралĕн 24-мĕшĕнче, çав тери хăвăрт атакăласа, ДНО хулипе паха чугун çул узелне — нимĕçсен ПСКОВ енчи оборонин хăватлă тĕреклетнĕ пунктне — туртса илнĕ.

ДНО хулине туртса илессишĕн пынă çапăçусенче КОРОТКОВ генерал-лейтенантăн, РОГИНСКИЙ генерал-лейтенантăн, СТЕПАНЕНКО генерал-майорăн, РОЖДЕСТВЕНСКИЙ генерал-майорăн çарĕсем, артиллери генерал-майорĕн КУПРИЯНОВĂН, артиллери генерал-майорĕн ПЕТРОПАВЛОВСКИН артиллерисчĕсем, ПШЕНЕЦКИЙ полковникăн тата УРБАНОВ полковникăн танкисчĕсем чапа тухнă.

Тунă çĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, ДНО хулине ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чаçсене «ДНОВСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, февралĕн 24-мĕшĕнче, 21 сехетре пирĕн Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, çĕр çирĕм тăватă тупăпа вуникĕ хут пĕр харăс персе, ДНО хулине туртса илнĕ хамăрăн паттăр çарсене Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Питĕ чаплă çапăçнăшăн Эсир ертсе пыракан мĕнпур çарсене, ДНО хулине ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче пулнăскерсене, ТАВ ТĂВАТĂП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн пыракан кĕрешӳре вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ
И. СТАЛИН.

1944 çулхи февралĕн 24-мĕшĕ.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Арми генералне РОКОССОВСКИЕ

БЕЛОРУССИРИ 1-мĕш фронт çарĕсем, ДНЕПР шывĕ урлă каçса, нимĕçсен çирĕп оборонине фронт сарлакăшĕпе 50 километр татнă та, тăшмана виçĕ кун хушши тапăнса пырса, 20—25 километр малалла куçнă, вăрра паян, февралĕн 24-мĕшĕнче, РОГАЧЕВ хулипе пысăк чугун çул станцине — нимĕçсен оборонин Бобруйск енчи тĕреклетнĕ паха пунктне — штурмласа туртса илнĕ.

РОГАЧЕВ хулине туртса илессишĕн пынă çапăçусенче ГОРБАТОВ генерал-лейтенантăн, УРБАНОВИЧ генерал-майорăн çарĕсем, артиллери генерал-лейтенанчĕн СЕМЕНОВĂН артиллерисчĕсем, МАКАРИКОВ подполковникăн, БЕЛЯКОВ майорăн танкисчĕсем, авиаци генерал-лейтенанчĕн РУДЕНКĂН летчикĕсем тата ВОРОНОВ полковникăн, КОЖИН майорăн, ШАФЕРОСТ капитанăн саперĕсем чапа тухнă.

Тунă çĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, РОГАЧЕВ хулине ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чаçсене «РОГАЧЕВСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, февралĕн 24-мĕшĕнче, 22 сехетре пирĕн Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, çĕр çирĕм тăватă тупăпа вуникĕ хут пĕр харăс персе, РОГАЧЕВ хулине туртса илнĕ Белоруссири 1-мĕш фронтăн паттăр çарĕсене Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Питĕ чаплă çапăçнăшăн Эсир ертсе пыракан мĕнпур çарсене, РОГАЧЕВ хулине ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче пулнăскерсене, ТАВ ТĂВАТĂП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн пыракан кĕрешӳре вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ
И. СТАЛИН.

1944 çулхи февралĕн 24-мĕшĕ.

Çулпуç приказĕ татах та хастарлăнрах ĕçлеме чĕнет

КУСЛАВККА. Комбинат коллективĕ, Хĕрлĕ Çар кунĕ тĕлне уйăхри задание пурнăçлама пулса, хăй çине пысăк обязательство илнĕччĕ.

Комбинатри рабочисем хăйсен сăмахне чыслăн пурнăçларĕç, февралĕн 23-мĕшĕ тĕлне уйăхри производство планне ытлашшипех тултарчĕç. Шукст, Хитин, Калашников юлташсем ертсе пыракан цехсем уйăхри государство заданине февралĕн 21-мĕшĕ тĕлнех пурнăçларĕç.

Рабочисемпе работницăсем ывăнма пĕлмесĕр ĕçлерĕç. Калашников юлташ начальник пулса ĕçлекен цех иртнĕ уйăхсенче производство планне срокра пурнăçласа пырайман, февраль уйăхĕнче вăл задание 8 кун маларах пурнăçларĕ.

Комбинатри стахановецсем Смоловик, Федоров, Мачикин, Павлов юлташсем, стахановла вахтăна тăрса ĕçлесе, ĕç нормине икĕ-виçĕ хут иртгерсе тултарчĕç.

Комбинатра Верховный Главнокомандующин Сталин юлташăн паттăр Хĕрлĕ Çар 26 çул тултарнă ятпа панă приказне радиопа итленĕ хыççăнах митинг пулса иртрĕ. Митингра рабочисемпе работницăсем, Хĕрлĕ Çара чаплă çĕнтерӳсемшĕн чĕререн тав туса, хăйсен ĕçĕнче татах та пысăкрах çитĕнӳсем тума сăмах пачĕç.

И. ПЕТРУЧЕНКО,
Партбюро секретарĕ.

* * *

КАНАШ. Инвалидсен «Красный Воин» артелĕн коллективĕ Хĕрлĕ Çар 26 çул тултарнине уйăхри плана тултарнипе кĕтсе илме сăмах панăччĕ. Панă сăмаха рабочисем чыслăн пурнăçларĕç. Стахановец Шахвурист февраль уйăхĕнчи плана çур уйăх хушшинче 202 процент тултарчĕ. Çавăн пекех çĕвĕçĕ Слободянник юлташ уйăхри плана çур уйăхра 195 процент тултарнă. Алшиш-чăлха çыхакан цехри М. Федорова, М. Петрова стахановкăсем те çав вăхăт хушшинче задание 181—197 процент пурнăçланă. Ку уйăхра атă-пушмак çĕлекен цех та аван ĕçлерĕ. Мастер Липкин юлташ задание 185 процент тултарчĕ.

Сталин юлташăн приказĕпе хавхаланса, артельти рабочисемпе работницăсем ĕç тухăçлăхне ӳстерсех пыраççĕ.

* * *

Якунин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ заводра Верховный Главнокомандующин Сталин юлташăн Хĕрлĕ Çар уявĕ ячĕпе панă приказне сӳтсе-явас майпа пур цехсенче те митингсем пулса иртрĕç.

— Паттăр Хĕрлĕ Çар нимĕç фашисчĕсене хамăр çĕр çинчен тасатса пырать. Тăшманăн пĕтес кунçулĕ çывхарчĕ. Эпир, орденлă заводра ĕçлекенсем, фронтовиксемпе танлашса, фронта кирлĕ продукцие ытлăнçитлĕн парса тăрăпăр. Çулпуçăн приказне ĕçпе ответлĕпĕр, — теççĕ заводри рабочисемпе работницăсем. Кинсбургский юлташ начальник пулса ĕçлекен цех коллективĕ февраль уйăхĕн программине срокчен тултарма пулчĕ. «Ĕçри хастарлăхшăн» медаль илнĕ З. Данилова юлташ ĕç нормине кулленех 300 процент тултарма пулчĕ.

Завод коллективĕ пĕтĕм союзри социализмлă ăмăртура ку уйăхра та мала тухассишĕн ăмăртăва анлăн сарса ячĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

ФЕВРАЛĔН 23-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Февралĕн 23-мĕшĕнче пирĕн çарсем ЛУГА хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре тата кăнтăртарахра малалла тапăнса пынă, тăшман хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкса, Ленинград облаçĕнчи СТРУГИ КРАСНЫЕ район центрĕпе пысăк чугун çул станцине туртса илнĕ, çавăн пекех тата тăшманпа çапăçса ытти 30 яла ытла йышăннă. Вĕсен шутĕнче — ДУБРОВО, ЖУБАНОВО, ЛУДОНИ, ВЕЛАНИ, ШИРСК, ТЕРЕ-БУНИ, ХРОДИНО, ЗАЛАЗЫ, ПОРЕЧЬЕ, ВИДОНИ, ЗАМУШКИ.

ИЛЬМЕНЬ кӳллинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем ăнăçлă наступление вăйлатса пынă, тăшманпа çапăçса халăх пурăнакан 150 пункта ытла тытса илнĕ. Вĕсен шутĕнче — СИТНЯ, ЗЕЛЕМЕНЬЕ, ГОРОДИЩЕ, ЛУКОМА, ЗАЛЕСЬЕ, ЗАМОШКИ, ШИЛЬСКАЯ, ВЫСКОДЬ, ВИШЕНКА, ГАВРОВО, ДРОЗДИХА, ХОТОВАН, АДЕРШИНО, ПЕТРОВО, СЕМЕНОВЩИНА ялĕсем тата КУКЛИНО, ЛЕМЕНКА, ГАЧКИ, ПОЛОНКА, 3-мĕш ДНО чугун çул станцийĕсем. Пирĕн çарсем, тăшман хирĕç тăнине çĕмĕре-çĕмĕре, ДНО хулипе пысăк чугун çул узелĕ патне таччăнах пырса тухнă та тăшманпа хулан çурçĕр тата хĕвелтухăç тулашĕнчи урамĕсенче çапăçма пуçланă.

КРИВОЙ РОГ хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тата хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем малалла тапăнса пынă, темиçе ял туртса илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведка тунă, артиллерипе минометсем персе тăнă, чылай пунктсенче тĕллĕн çапăçнă.

Февралĕн 22-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 140 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 20 самолетне персе ӳкернĕ.

ПИРĔН САМОЛЕТСЕМ АБО (ТУРКУ) ХУЛИНЕ ТАПĂННИ

Февралĕн 23-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн авиаци финсен портне — Або(Турку) хулине вăйлăн тапăннă, çав хулари çарпа промышленность объекчĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Пушарсем нумай тухнă, пушарсенче взрывсем пулнă. Пуринчен те вăйлăрах пушарсемпе взрывсем суднăсем тăвакан верфьпе механически завод территорийĕнче, çавăн пекех тата тăшманăн çар склачĕсен районĕнче палăрнă.

Пирĕн 4 самолет хăйсен базисене таврăнман.

Юг çĕршывĕсенчи хаçатсенче пĕлтернĕ тăрăх, вырăс самолечĕсем Стокгольм районĕнче бомбăсем пăрахнă пулать. Çав пĕлтерӳсем пĕри те тĕрĕс мар. Стокгольм районĕнче вырăссен нимĕнле самолечĕсем те пулман, çавăнпа вĕсем вăл районра бомбăсем те пăрахма пултараймаи.

* * *

Луга хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре тата кăнтăртарахра пирĕн çарсем Ленинград облаçĕнчи Струги Красные район центрĕпе пысăк чугун çул станцине туртса илнĕ, çавăн пекех тата ытти 30 яла ытла йышăннă. Пĕр участокра пĕр чаçри боецсем малалла куçнă та нимĕç пехотине пĕр батальон таран пĕтерсе тăкнă. Çав чаçри артиллеристсемпе минометчиксем тăшманăн 4 танкне, 7 туппине персе çĕмĕрнĕ тата боеприпассен 3 пысăк складне сирпĕнтерсе янă. Тепĕр районра Тимошин капитан командир пулса ертсе пыракан батальон тăшман тылĕнче шоссе çулĕ çине тухнă та çав çула пирĕн тĕп вăйсем çитиччен виçĕ кун хушши хăй аллинче тытса тăнă. Çав вăхăт хушшинче пирĕн боецсем тăшманăн темиçе контратакине сирсе янă, 200 гитлеровеца ытла пĕтерсе тăкнă.

* * *

Ильмень кӳллинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем çаплах ăнăçлă наступлени туса пынă. Тăшман хирĕç тăнине çĕнтере-çĕнтере тата унăн çыннисемпе техникине пĕтере-пĕтере, совет боецĕсем фашистла нимĕç захватчикĕсенчен халăх пурăнакан 150 пункта ытла ирĕке кăларнă. Пĕр соединени чаçĕсем, çав тери хăвăрт малалла куçса пырса, тăшман оборонин темиçе узелне аркатса тăкнă, тăшманпа Дно хулипе пысăк чугун çул узелĕн тулашĕнче çапăçма пуçланă. Кун каçичченхи çапăçусенче 1500 гитлеровеца ытла пĕтерсе тăкнă, трофейсем тытса илнĕ. Нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене тыткăна нумай илнĕ.

* * *

Кривой Рог хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тата кăнтăртарахра пирĕн çарсем çаплах малалла тапăнса пынă, темиçе ял тытса илнĕ. Кривой Рог хули патне пыракан вырăнсенче пулса иртнĕ çапăçусенче пирĕн çарсем, туллимар даннăйсем тăрăх, нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 6000 çын таран пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсенчен 16 танк, 100 тупă ытла, 680 пулемет, 7000 автоматпа винтовка, 660 автомашина, 170 вагон, çар хатĕрĕсем тиенĕ лавсем нумай, боеприпассемпе çар пурлăхĕн 6 пысăк складне тытса илнĕ. Кривой Рог хулинче тытса илнĕ трофейăсене халĕ шута илеççĕ.

* * *

Молдаван партизанĕсен отрячĕ боевой задание кайнă чухне нимĕçсен пехотин батальонне тĕл пулнă. Партизансем тăшмана атакăланă та хаяр çапăçура 100 гитлеровеца çити пĕтерсе тăкнă. Каменец-Подольск облаçĕнче кĕрешекен партизансен отрячĕн пĕр ушкăнĕ чугун çул станцине кĕрсе кайнă та тăшманăн горючи турттарса пыракан эшелонне сирпĕнтерсе янă. Вăйлă пушар тухнă, пушарта вăйлă взрывсем пулнă. 20 цистерна горючи тата 32 вагон тĕрлĕ çар хатĕрĕсем çунса кайнă.

* * *

Верховный Главнокомандующи Сталин юлташ Хĕрлĕ Çар 26 çул тултарни çинчен панă приказ совет çĕршывĕн ĕççыннийĕсем хушшинче çĕнĕрен питĕ пысăк хавасланăх тата патриотла çĕнĕ çĕкленӳ хускатса ячĕ. Митингсемпе пухусенче рабочисем, колхозниксем тата интеллигентсем мухтавлă Хĕрлĕ Çара, юратнă çулпуçа Сталин юлташа саламлаççĕ. Вĕсем çапла калаççĕ: эпир фашистла нимĕç захватчикĕсене хăвăртрах тата тĕппипех аркатса тăкма мĕн кирлине Хĕрлĕ Çара пĕтĕмпех пама пулатпăр, теççĕ.

Мускаври «Серп и молот» ятлă металлурги заводĕнчи митингра сталевар Дроздов юлташ сăмах тухса каланă. Вăл çапла каланă: «Сталин юлташ рабочи класс тăрăшни пирĕн татăклă çĕнтерĕвĕн сехетне çывхартса килет, терĕ. Çак сăмахсене эпир питĕ хĕпĕртесе кĕтсе илтĕмĕр. Эпир металл шăратса кăларассине ӳстерме тăрăшăпăр. Эпир тăрăшнине пула Хĕрлĕ Çар нимĕç ирсĕрĕсене тата вăйлăрах, пыра-пыра çапма пултарчĕ. Аслă тата ăслă çулпуç пире тăшман вăйĕсене тивĕçлипе хак пама хушать. Сыхă пулма хушать, капăрланма хушмасть, лăпланса ларма, такам туса парасса кĕтсе ларма хушмасть. Эпир Сталин юлташа çакна ĕнентерсе калатпăр: совет рабочийĕсем унăн кăтартăвĕсене пурнăçа чыслăн кĕртĕç. Эпĕ кашни шăратса кăларассерен 5 тонна хурçă заданирен ытларах пама пулатăп». «Серп и молот» заводри рабочисем продукци туса кăларассине ӳстерме сăмах панă.

Ленинградри предприятисенчи митингсем те питĕ хавассăн пулса иртнĕ. Капралов юлташ партком секретарĕ пулса ĕçлекен заводри коллективăн митингĕнче кузнечно-термически цех бригадирĕ Гришин юлташ сăмах тухса каланă. «Ленинград хулине тăшман блокадинчен ирĕке кăларни, — тенĕ вăл, — пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çарăн питех те пысăк çĕнтерĕвĕ пулса тăрать. Эпир те пире аслă Сталин вĕрентнĕ пек ĕçлеме пулатпăр. Стахановла вахтăна тăрса, ман бригада продукци икĕ хут ытларах туса кăларма пуçларĕ. Ĕнерпе паян пирĕнтен кашниех 2—2,5 норма турĕ». Чугун шăтаракан цехри работница Дерко юлташ çапла каланă: «Хамăр Хĕрлĕ Çара тата аслă полководеца Сталин юлташа эпир пĕтĕм чĕререн тав тăватпăр. Ленинград хули ĕнтĕ каллех тулли кăкăрпа сывлать. Эпир Сталин юлташа çакăн пек таса сăмах паратпăр: эпир малашне те фронтри пек, Ленинград çыннисем пек ĕçлеме пулатпăр».

Куйбышеври машинăсем тăвакан заводри рабочисем Хĕрлĕ Çар 26 çул тултарнă куна продукцие планра кăтартнинчен ытларах кăларнипе паллă туса уявланă. Февралĕн 23-мĕшĕнче завод коллективĕ февральти планран ирттерсе хатĕрленĕ япаласене фронта ячĕ. Завод цехĕсенче йышлă çынлă митингсем пулса иртнĕ. Слесарь Феоктистов юлташ çапла каланă (ăна заводри мĕнпур рабочисем ырланă): «Паян пирĕн пĕтĕм çĕршыв паттăр Хĕрлĕ Çара хĕрӳллĕн саламлать. Эпир хамăрăн юратнă çулпуçа Сталин юлташа çапла шантарса калатпăр: хамăра хамăр хĕрхенмесĕр ĕçлесе, нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан таса кĕрешӳре хамăрăн Хĕрлĕ Çара тата вăйлăрах пулăшма пулатпăр», тенĕ.

Çуракине хатĕрленмелли фронтовой уйăхлăх

Колхозниксемпе колхозницăсем, МТС-семпе совхозсенчи рабочисемпе работницăсем! Çуракине кăтартуллăн хатĕрленсе тата ăна ăнăçлăн туса ирттерсе, 1944 çулта пысăк тухăçлă тырпул туса илер! Фронтпа çĕршыва—апат-çимĕç, промышленность валли—чĕртавар ытларах та ытларах парар!

РЕСПУБЛИКАРИ КОЛХОЗСЕНЧЕ ФЕВРАЛĔН 20-МĔШĔ ТĔЛНЕ ÇУРАКИНЕ МĔНЛЕ ХАТĔРЛЕННИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА
(процентпа)

Районсем	Вăрлăх тасатнă	Клевер вăрри хывнă	Çĕрулми вăрлăхĕ хывнă	Тислĕк кăларнă	Юр тытнă
Улатăр	45,6	16,6	30,1	62,2	24,4
Элĕк	100	45,2	86,7	65,6	91,4
Вăрнар	116,8	23,3	73,0	120,7	56,0
Йĕпреç	67,5	37,0	64,8	44,1	45,5
Ишлей	83,0	40,0	83,0	51,3	68,6
Калинино	84,9	27,3	79,2	95,6	49,3
Канаш	72,8	12,5	36,3	61,0	84,6
Куславкка	97,6	18,3	86,6	53,6	70,6
Комсомольски	68,3	15,3	49,2	51,5	65,0
Красноармейски	41,1	20,6	73,8	20,7	65,5
Хĕрлĕ Чутай	98,0	32,6	58,7	76,8	65,9
Кувакино	60,9	2,8	16,3	38,7	54,5
Сĕнтĕрвăрри	106,4	37,5	86,2	71,3	33,7
Октябрьски	98,2	31,8	96,3	70,1	33,5
Первомайски	91,6	—	41,3	44,4	—
Пăрачкав	73,7	4,4	41,4	26,3	14,1
Советски	49,7	23,6	109,2	47,1	106,4
Сĕнтĕр	77,6	46,1	83,3	81,8	75,9
Вăрмар	71,2	16,4	94,0	84,0	91,7
Çĕрпӳ	110,8	17,1	90,9	76,4	84,1
Шупашкар	95,5	14,8	99,6	60,0	39,0
Чкаловски	61,2	—	20,5	54,4	70,3
Шăмăршă	56,0	11,1	12,1	26,2	24,6
Шăхасан	97,3	11,6	56,9	35,6	46,3
Çĕмĕрле	75,3	35,0	41,2	59,2	30,7
Етĕрне	91,7	30,0	110,6	77,0	69,1
Елчĕк	92,8	10,9	39,1	73,4	104,8
Тăвай	92,6	21,8	63,5	59,9	61,7
Шупашкар хули	88,6	100,0	103,9	40,1	100

Шупашкар тата Ишлей МТС-ĕсем тракторсене юсаса пĕтернĕ

Комсомольски, Шăхасан, Красноармейски, Йĕпреç, Елчĕк, МТС-ĕсем хыççăн Шупашкар тата Ишлей МТС-ĕсем те тракторсене юсаса пĕтернĕ.

Вăрнар тата Куславкка МТС-ĕсем тракторсем юсаса пĕтереççĕ.

Хăйсен ĕçĕсене тĕрĕслеççĕ

Сĕнтĕрвăрри районĕнчи «Большевик» колхоз колхозникĕсем, çитес çулхи вăйлă тырпулшăн кĕрешĕве тухса, 229 центнер вăрлăх сортласа, тасатса, типĕ амбарсене хунă. Уя 2000 лав ытла тислĕк кăларнă, 45 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, 60 центнер кĕл пухнă. Ялхуçалăх машинисене юсас ĕç те ăнăçлăн пулса пырать, паянхи куна мĕнпурĕ 21 плуг, 15 сӳре, юсаса лартнă. Çуракине хатĕрленес ĕçре уйрăмăнах Веденский, Львов юлташсен бригадисем малта пыраççĕ. Ку бригадăсенче çураки вăхăтĕнче кӳлмелли лаша таврашĕсене те пĕтĕмпех юсаттарса хунă.

Халĕ çуракине хатĕрленмелли фронтовой уйăхлăх пуçланнă май, халиччен тунă ĕçсене тепĕр хут тĕплĕн пăхса тухаççĕ.

И. ТРИФОНОВ.

Малта пыраканнисемпе танлашмалла

ВĂРНАР. Районри колхозсем 1944 çулта хăйсен уйхирĕсенче кашни гектартан 100-шер пăт тĕштырă туса илессишĕн кĕрешеççĕ. Районри малта пыракан колхоз председателĕсемпе колхоз çамрăкĕсен районри слечĕ пуçарнă социализмлă ăмăрту анлăн сарăлса пырать. Халĕ, вăрлăх фончĕсене хывса çитернĕ хыççăн, вырăнти удобренисене хатĕрлесе уя турттарас тĕлĕшпе хĕрӳллĕн ĕçлеççĕ.

Вăйлă тырпул никĕсне малтан хывас пулать. Фронтра, наступленилле операцисем тума малтанах тĕплĕн хатĕрленнĕ пекех, пирĕн те çуракине малтанах тĕплĕн хатĕрленес пулать. Çапла кăна эпир умма лартнă задачăна ăнăçлăн пурнăçлама пултаратпăр, — тет «Самолет» колхоз председателĕ Н. Петров юлташ.

«Самолет» колхозра çуракине хатĕрленес ĕç тĕплĕн пулса пырать. Планпа 450 гектар акса хăвармалла, çав çĕр лаптăкĕ валли мĕнпур вăрлăхсене сортласа, пĕрремĕшпе иккĕмĕш класлă кондицине лартнă. 40 плуг, 3 сеялка юсанă, кашни ĕçлекен лаша пуçне икшер комплект ут таврашĕсем хатĕрленĕ. Уя 8000 лав тислĕк кăларнă, ку тĕлĕшпе халĕ те хĕрсех ĕçлеççĕ. Комсомолецсемпе çамрăксем тата шкул ачисем кĕл, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухаççĕ.

«Вюлга» колхоз çулсеренех вăйлă тырпул туса илет. Ку вăл вырăнти удобренисемпе лайăх усă курнинчен килет. Кăçал та колхозниксем уя 15 пин лав тислĕк кăларма пăхнă. Паянхи кун тĕлне 8000 лав кăларнă. Кунсăр пуçне 50 центнер кĕл, 30 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухса хунă.

Çавăн пекех вырăнти удобренисене хатĕрлесе уя кăларас тĕлĕшпе Ленин орденлĕ Сталин ячĕпе тăракан, «Победа», «Майăн 1-мĕшĕ», Киров ячĕпе тăракан, «Гигант» колхозсем хĕрӳллĕн ĕçлеççĕ.

Çав вăхăтрах «Красный Санар», «Пионер» колхозсем çуракине питĕ начар хатĕрленеççĕ. Вĕсен малта пыракан колхозсемпе танлашмалла.

Е. ВОЛКОВ.

Вырăнти удобренисем хатĕрлеççĕ

КАЛИНИНО, февралĕн 19-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри комсомолецсемпе çамрăксем, вырăнти удобренисем хатĕрлемелли уйăхлăха хутшăнса, хире 2.013 лав тислĕк кăларнă, 221 центнер кĕл, 105 центнер фекали, 100 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă, 100 лава яхăн торф кăларнă. Уйрăмăках комсомолăн Хурăнкăкшăмри (секретарĕ И. Семенов), Кӳлхĕрринчи (секретарĕ В. Павлов) пуçламĕш организацийĕсем тăрăшса ĕçлеççĕ. Кӳлхĕрринчи «Трактор» колхозра комсомолецсем хăйсем кăна хире 312 лав тислĕк кăларнă, 24 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, 100 центнер кĕл пухнă.

Б. ШОРНИКОВ.

РЕСПУБЛИКАРИ МТС-сем 1944 ÇУЛХИ ФЕВРАЛĔН 20-МĔШĔ ТĔЛНЕ ТРАКТОРСЕНЕ ЮСАМАЛЛИ ПЛАНА МĔН ЧУХЛĔ ТУЛТАРНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА

МТС-сем	Пурĕ юсанă (процентпа)	Февраль уйăхĕнчи плана тултарнă (процентпа)
Шăхасан	107,1	40,0
Комсомольски	100,0	50,0
Красноармейски	100,0	—
Йĕпреç	100,0	75,0
Елчĕк	100,0	100,0
Ишлей	100,0	84,6
Шупашкар	100,0	42,2
Вăрнар	86,7	72,7
Куславкка	82,6	80,0
Элĕк	81,8	88,8
Сĕнтĕрвăрри	76,0	80,0
Сĕнтĕр	74,4	33,3
Çĕмĕрле	73,0	50,0
Первомайски	72,0	60,0
Шăмăршă	69,4	37,5
Чкаловски	69,2	45,4
Çĕрпӳ	67,7	50,0
Етĕрне	66,6	37,5
Кувакино	62,7	53,3
Канаш	62,2	—
Тăвай	60,0	100
Вăрмар	59,5	50,0
Улатăр	53,4	37,5
Хĕрлĕ Чутай	52,1	25,0
Пăрачкав	48,8	86,6
Пĕтĕмпе	75,2	61,5
Февралĕн 15-мĕшĕ тĕлне пулнă	71,8	44,8

Гитлер ставкинчи мыскара

Февралĕн 3-мĕшĕнче Хĕрлĕ Çарăн Верховный Главнокомандованийĕ Звенигородкăпа Шпола районĕнчен сурçĕртерехре нимĕç çарĕсен пысăк группировкине çавăрса илни çинчен пĕлтернĕ. Ун хыççăн Совет Информаци бюровĕ çав çавăрса илнĕ нимĕç çарĕсене пĕтерсе пыни çинчен кулленех пĕлтерсе пычĕ.

Февралĕн 18-мĕшĕнче вара Корсунь-Шевченковский районĕнче çавăрса илнĕ нимĕçсен 8-мĕш армийĕн 10 дивизийĕпе пĕр бригадине вунтăватă кун хушши хаяррăн çапăçнă хыççăн пĕтĕмпех пĕтерсе тăкни çинчен Хĕрлĕ Çарăн Верховный Главнокомандующийĕ приказ кăларчĕ. Çав кунах Совет Информаци Бюровĕ тăшман çарĕсен çавăрса илнĕ группировкине пĕтерсе тăкас ĕçĕн, пирĕн çарсем çав пит лайăх туса ирттернĕ ĕçĕн итогĕсем çинчен данниĕсем пичетлесе кăларчĕ.

Нимĕç командованийĕ хăйĕн çарĕсене çавăрса илни çинчен нимĕн те каламасăр тăчĕ, ку çеç те мар, вăл çав районра анăçла çапăçусем пыраççĕ, тесе те шавларĕ.

1943 çулăн пуçламĕшĕнче, совет çарĕсем Сталинград патĕнче 300.000 çынлă фашистла нимĕç çарне пĕтерсе тăкнă хыççăн, Германи çарĕн верховнăй главнокомандованийĕ хăйĕн çарĕ Совет Союзĕпе Германи фронтĕнче пысăк поражени тўснине йышăнма хăюлăх çитерейĕччĕ. Гитлеровецсен власть пуçĕнче тăракан шайкки ун чухне хăйĕн 300.000 çынлă армине совет çарĕсем Сталинград патĕнче хупăрласа илсе, пĕтерсе тăкнă пирки пĕтĕм Германийĕпе виçĕ кунлăх траур тунăччĕ. Анчах халĕ ĕнтĕ урăх вăхăтсем килсе çитрĕç пуль çав, гитлеровецсем ĕнтĕ урăх юрăсем юрлама пуçларĕç. Иртнĕ çулталăк хушшинче нимĕç çарĕ пысăк поражениесем тўснĕ хыççăн гитлеровецсен шайкки пирĕн фронтра нимĕç çарĕ йывăр поражениесем тўсни çинчен уççăн калама урăх хăяймасть ĕнтĕ. Нимĕçсен фашистла çар машини (ăна Хĕрлĕ Çар татăклă поражени тўсес патнех илсе çитерчĕ) çавăн пек каланине чăтма пултараймасть, ун пек каласан, Германи вăрçăпа политика тĕлĕшĕнчен хытă кисренме пултарать. Звенигородкăпа Шпола хулисенчен сурçĕртерехре фашистла нимĕç çарĕсене 70.000 çынна ытла çавăрса илнине, уйрăмах та вĕсене пирĕн Хĕрлĕ Çар пĕтерсе тăкнине Гитлер ставки Германи çарĕнчен те, Германи халăхĕнчен те, пĕтĕм тĕнчерен те мĕн пирки çав тери çине тăрсах пытарса усрани паллă ĕнтĕ.

Нимĕçсем хăйсен çарĕсем калама çук пысăк поражени тўсни çинчен каламасăр тăма питĕ тăрăшрĕç пулин те, вĕсен кайран-кайран каламаллах пулса тăчĕ, мĕншĕн тесен нимĕçсен çавăрса илнĕ 10 дивизине пĕтерсе тăкнă чухне нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 55.000 çынна вĕлерсе пĕтернĕ, 18.200 çынна тыткăна илнĕ, çавăн пекех тата çавăрса илнĕ нимĕç çарĕсен пĕтĕм техникипе мĕнпур хĕçпăшалне тытса илнĕ.

Çакă паллă: нимĕç командованийĕ хăйĕн çарĕсене çавăрса илнĕ ункăран илсе тухма çав тери хытă тăрăшрĕ, анчах илсе тухаймарĕ, вара гитлеровецсем çав тери хăраса ўкрĕç, нимĕн тума та аптăрарĕç. Нимĕç командованийĕн хальхи трюкĕ вăл картла выляканcемпе жуликсем инкеке кĕрсе ўкнипе тунă утăм пулса тăрать, ăна урăхла хаклама та çук. Çав трюк вăл ак мĕнлескер: Корсунь-Шевченковский районĕнче çавăрса илнĕ нимĕç çарĕсене пĕтерсе тăкнă хыççăн Гитлер ставки çапла пĕлтерчĕ: пĕтерсе тăкнă 70.000 ытла нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсем çав ункăран анăçалла татса тухнă пулать те халь çывăх пулăшнă çарсем патне пынă пулать.

Паллах ĕнтĕ, нимĕçсем хăйсен суя хыпарĕ 10 дивизине пĕтерсе тăкнă пулĕччĕç, анчах та, халĕ калашле, вилнисене чĕртме май çук.

Хăйсен темĕнле вунă пин салтакĕпе офицерĕ пĕтнĕ хыççăн (вĕсене Хĕрлĕ Çар 14 кун хушшинче пĕтерсе тăкрĕ) гитлеровецсем халь хăйсене хăйсем çапла каласа лăплантараççĕ: антив, фашистла вунă дивизи çук пултăр, анчах та хăйсен çарĕсене пăрахса хăварса самолетсемпе тарнă генералсем пур. Вĕсем, чи малтан çаксем: 112-мĕш пехотнăй дивизин командирĕ Либ генерал-майор тата СС «Викинг» танковăй дивизин командирĕ Гилле генерал-майор. Хăйсен çарĕсене пăрахса хăварса, транспорт самолечĕсемпе тарнă нимĕç генералĕсем нимĕç çарĕн ставкине пынă. Çакăнпа усă курса, гитлеровецсем вара ытла та кулăшла мыскара туса ирттернĕ. Гитлер çав генералсене хăйĕн ставкинче йышăннă та вĕсене «хăйсем тунă питĕ паха ĕçсемшĕн тата вĕсем ертсе пынă çарсем хастарлăн кĕрешнĕшĕн» тесе, «аслă наградăсем» панă.

Паллах ĕнтĕ, пурте йышăннă йĕркесем тăрăх кирек хăш çарта та çапла тунă пулĕччĕç: хăйсен çарĕсене çав тери пысăк йывăрлăха кĕртсе ўкерсе, вĕсене унта вĕлерсе пĕтермешкĕн пăрахса хăварнă таркăн генералсене ĕмĕрлĕхех намăса кăларнă пулĕччĕç, вĕсене суда панă пулĕччĕç. Анчах Гитлерпа унăн СС генералĕсем намăса пĕлмеççĕ çав вĕсем.

Гитлер ставкинче мĕншĕн çавăн пек мыскара туни паллă: çавăн пек ухмахла хăтланса, гитлеровецсем нимĕç çарĕсене Хĕрлĕ Çар иккĕмĕш Сталинград кăтартнине, Хĕрлĕ Çар фашистла нимĕç вăрă-хурахĕсене халиччен курман пек йышлăн вĕлернине пытарасшăн, нимĕçсен 10 дивизине вĕлерсе пĕтермелле туса хунă Гитлерăн преступленийĕсене пытарса хăварасшăн.

Çав комедин çак актне те, акă, çавăншăнах тунă: нимĕçсен 11-мĕш армейски корпусĕн командирне Штеммерман генерала, хупăрласа илнĕ группировкăн командующийĕ пулнăскерне, çав группировкăна пĕтерсе тăкасшăн çапăçнă чухне пирĕн боецсем вĕлернĕскерне, наградă панă. Çавăрса илнĕ нимĕç çарĕсене пĕтерсе тăкнă хыççăн çав генералăн виллине çапăçу хирĕнче тупнă, вăл унта генерал формипех выртнă. Паллах ĕнтĕ, халĕ Штеммермана Гитлер орден пани вилнĕ çынна эмелленĕ пекех пулать.

Гитлер ставкинче начар выляса кăтартнă камитрен çакă паллă: Гитлер хăйĕн пĕтнĕ çарĕсене пĕтмен тесе кăтартать пулсан, çапăçу хирĕнчен намăса пĕлмесĕр тарса кайнă генералсене наградăсем парать пулсан, — Совет Союзĕпе Германи фронтĕнче фашистла нимĕç çарĕсемшĕн начар вăхăт килсе çитнĕ пулать. Тата çакă та паллă: пуçĕсене çухатнă гитлеровецсем çавăн пек жуликла хăтланни, вĕсен çавăн пек çĕнĕ камичĕ—Корсунь-Шевченковский районĕнче совет çарĕсем пĕтерсе тăкнă вунă дивизи пирки нимĕн те улталама пултараймасть.

СОВИНФОРМБЮРО.

Йĕлтĕрçĕсен эстафети Шупашкарта

Хĕрлĕ Çар 26 çул тултарнă ятпа республикăра йĕлтĕрçĕсен эстафети пулса иртрĕ.

Эстафета участникĕсем февралĕн 23-мĕшĕнче Шупашкара çитрĕç. Эстафетăна Хĕрлĕ площадьре ВКП(б) Обкомĕн çарĕç пайĕн заведующийĕ Рябов юлташ, Чăваш АССР Военкомачĕн политотдел начальникĕ Тютиков юлташ, ВЛКСМ Обкомĕн пропаганда енĕпе ĕçлекен секретарĕ Михайлов юлташ кĕтсе илчĕç. Сав ятпа пулса иртнĕ митингра ВЛКСМ Обкомĕн секретарĕ Михайлов юлташ, эстафета участникĕсене саламласа, сăмах каларĕ.

Кăнтăрла иртсен виçĕ сехетре эстафета участникĕсем Пионерсен çуртĕнче Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председательне З. Андреева юлташа вăрçă ĕçне вĕренесси мĕнле пыни çинчен рапорт пачĕç. Унтан З. А. Андреева юлташ вăрçă ĕçне вĕренни халĕ мĕн тери пысăк вырăн йышăнса тăни çинчен сăмах тухса каларĕ.

Кроса 4.390 çын хутшăннă

ЭЛĔК. (Хамăр корр.). Профсоюзпа комсомолăн Хĕрлĕ Çар 26 çул тултарнă ятпа иртекен йĕлтĕрлĕ кросне районра 4.390 çын хутшăннă. Вĕсенчен колхоз çамрăкĕсем — 1327 çын, шкул ачисем — 1850 çын, комсомолецсем—674 çын. Кроса хутшăннисенчен 2294 çын ГТО тата БГТО нормисене панă. Ку ĕнтĕ вăл çамрăксене йĕлтĕрпе çўреме вĕрентес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçленине, тренировкăллă занятисем ирттерменнине пĕлтерет.

Вырăс Сорм, Элĕк, Тăвай шкулĕсенче вĕренекенсем кăçал хĕл пуçлансанах йĕлтĕр çине тăчĕç. Çавăнпа çав шкулсенче вĕренекенсем кросра йĕлтĕрпе лайăх çўреме пултарнине кăтартрĕç. Элĕкри вăтам шкулта вĕренекен Савельев, Сэйт комсомолецсем 10 километра 34 минутăра чупса тухнă.

Кросс февралĕн 27-мĕшĕнче вĕçленет. Анчах та Мăн Вылăри вăтам шкулта (ВЛКСМ организацийĕн секретарĕ Николаева) пĕр ача та кроса хутшăнман. Çавăн пекех Вутланти туллимар вăтам шкулта та кроса 9 ача çеç хутшăннă. ВЛКСМ организацийĕн секретарĕ Смирнова юлташ ку ĕçе лайăхрах ертсе пыма тивĕç

Х. ЛИСИН.

Фронтовиксен ачисем валли колхозсем тăвакан санаторисем

ЧИТА. Балей районĕнчи ача врачĕсем пуçарнипе, фронтовиксен ачисем валли колхозсем 3 санатори тунă. Ялсовет руководителĕсемпе колхоз правленийĕсем пулăшнипе, медицина работникĕсем çав санаторисем валли çуртсем тупса хунă, вĕсене кирлĕ пек майлаштарнă. Çав санаторисене темиçешер колхоз хăйсен укçипе тытса тăраççĕ. Санаторисенче 13 çултан иртмен 66 ача сывалат. Балей районĕнчи çынсем пекех, Шахта районĕнче те çавăн пек санатори уçнă.

Леонид Агаков

Лăпкă çын

(КАЛАВ)*

Чылай выртрĕ Куракин вилнĕ çын тĕсне кăтартса. Нимĕçсем çаплах печĕç. Пĕр вершук çĕкленнĕ пулсанах, унăн кĕлеткине вуншар пуля çитсе тăрăнма пултарнă. Унтан—те çур сехет иртрĕ, те ытларах, ăна чухлаймарĕ вăл—пуç çинче пульăсем шăхăрма пăрахрĕç, пăч-пач кăна, уйрăмăн-уйрăмăн, сапсасем пек сăрлатса ирте-ирте кайрĕç.

— Халех... халех тăратăп та, чупатăп. Пĕр çирĕм метр юлсан, малтан противотанковăйне, унтан çăмăллисене ывăтатăп... Куракинăн чĕрри тата хытăрах тапма пуçларĕ.

Суранĕсем ыратнине те туймарĕ вăл халь, пĕтĕм шăмшак вут пек пĕçерсе тăнине çеç сисрĕ. Ĕнтĕ, вăл сиксе тăрас патнех çитрĕ, аллинчи йывăр гранатăн аврине тата çирĕпрех чăмăртарĕ.

— Урра-а!.. За родину, впере-ед! —тесе кăшкăрни аслати пек янраса кайрĕ çав вăхăтра.

Паллах, кăна пирĕн боецсем кăшкăрнă, урăх никам та мар!..

Куракин пуçне вăштах çĕклесе, çав çĕнтерўллĕ «урра» янранă çĕрелле пăхрĕ те, хăйĕнчен сулахай енчен сахалтан та пĕр çĕраллă боец атака пуçласа янине курчĕ. Текех ĕнтĕ пĕр самант та, кăшт та тăхтаса тăма юраман: дзотри пулеметсем питĕ пысăк сиен кўме пултарнă.

Хăйне çил вĕрсе хăпартнă пекех сиксе тăчĕ вара юнланса пĕтнĕ Куракин. Умри виç амбразурăллă дзотсăр пуçне вăл халь урăх нимĕн те курмарĕ, пĕр çавсем çине пăхса çеç чупрĕ малалла. Темиçе секундăран, вилĕм йăви патне çитесси çирĕм-вăтăр утăм кăна юлсан, вăл мĕнпур вăйне пухрĕ те, аллинчи кĕске тукмак пек гранатăна дзот çинелле ывăтрĕ...

Калама та çук хăрушă та вăйлă взрыв пулчĕ. Пĕр хушă ку вырăнта хура çăра тĕтĕмсĕр пуçне нимĕн те курăнмарĕ. Унтан, тĕтĕм сирĕлсен, дзот пулнă вырăнта тĕрлĕ пĕренe, тимĕр каштасем, чул, кирпĕч купи кăна пăларса тухрĕ.

Виççĕмĕш батальон командирне пĕрин хыççăн тепри телефон патне чĕнме тапратрĕç. Малтан полк командирĕ калаçрĕ, унтан дивизи командирĕ патĕнчен чĕнчĕç. Вĕсем хăйсен наблюдательнăй пункчĕсенчен темле боец тăшманăн пулемечĕсем çинех пырса кĕрсе, ку таранччен çав тери кансĕрленĕ дзота сывлăшалла сирпĕтнине курсах тăнă.

— Кам турĕ ку ĕçе? — ыйтрĕç вĕсем.

— Пĕлместĕп-ха... Яблоков ротинчен пулас, анчах вăл камне тĕп-тĕрĕс калама пултараймастăп, — ответ пачĕ комбат.

— Халех шыраса тупса пĕлтерĕр!

— Юрать.

Комбатăн хăйĕн те кун çинчен епле пулсан та хăвăртрах пĕлес килчĕ. Ку паттăра вăл вилнĕ тесе шутланăччĕ ĕнтĕ, анчах та çав «вилнĕ çын» — ав епле номер туса хучĕ! Темиçе самант хушшинче, тăр пĕччен, пĕтĕм батальона çул уçса пачĕ,—дзот сирпĕнсенех стрелоксем пĕр чăрмавсăрах яла кĕрсе кайма пултарчĕç, халь ĕнтĕ нимĕн те чарса тăраймасть вĕсене. Çул уçă!

— Паянах, çапăçу хирĕнчех наградă памалла тăвас...

Комбат ял еннелле чупрĕ. Çул çинче те вăл çав боец çинченех шухăшласа пычĕ.

— Вилнĕ ан пултăрах... Çитсе тупас часрах, тав тăвас ăна!

—Анкартисем хыçĕнчи çырмара вăл чĕп-чĕр юн пулнă боеца икĕ санитар носилка çине хурса çĕклесе пынине курчĕ. Аманнă боецăн питне те бинтсемпе çыхса лартнă мĕн, ăна паллама та май пулман.

—Кам ку? тесе ыйтрĕ комбат санитарсенчен.

— Рядовой...

— Хăш тĕлтен илсе килетĕр?

— Нимĕçсен дзочĕ патĕнче пахчара выртатчĕ...

— Хушаматне пĕлмерĕр-и?

— Ыйтман.

— Пĕлесчĕ епле те пулсан! Калать-и вăл, çук-и?

— Эпир пырса тупнă чухах ним пĕлми выртатчĕ...

— Чимĕр-ха эппин, документсене пăхар. Мана питĕ кирлĕ вăл!

— Санитарсем носилкăна çĕре хучĕç те, вĕсенчен пĕри аманнă боецăн гимнастерка кăсйине хыпашлама тытăнчĕ. Боец шăпах тăна кĕнĕ самант пулнă пулмалла.

— Кам ку, мĕн кирлĕ?—ыйтрĕ вăл аран-аран тухакан сасăпа.

— Капитан сан хушамата пĕлесшĕн, — терĕ санитар.

— Мĕнле капитан?

— Хамăрăн ара, батальонри...

— Манни вара вăл? — боец йывăррăн сывласа ячĕ. — Куракин вĕт эпĕ.

— Комбат тĕлĕннипе картах сиксе илчĕ.

— Иван Васильич, эсĕ-и вара ку?

— Эпĕ çав... пур çĕртен те шăтарса пĕтерчĕç, шуйттансем!

— Дзота путараканни эс пултăн-и?

— Эпĕ...

— Пурне те тĕлĕнтеретĕн, Иван Васильич, геройран та герой пултăн! Куншăн сана пысăк наградă тивет ĕнтĕ, генерал хăй хушрĕ сана тупма.

— Нимĕнле наградă та кирлĕ мар мана...—Куракин хăйĕн куçĕсене картланă бинта сирчĕ.—Эп хам ĕмĕтленнине, тата хамăн ача хушнине турăм кăна. Сана спасибо вара—çапăçăва янăшăн...

— Комбатăн ăна хирĕç калама сăмах та тупăнмарĕ.

— Ну, юрĕ эппин,—терĕ вăл кăшт тăрсан,—май пулсанах санчаçе пыратăп-ха сана курма. Ун чух калаçăпăр.

— Пыр, эп сана унта пĕр япала кăтартатăп...

— Вĕсем пĕр-пĕрин çине çав тери кăмăллăн пăхса илчĕç те, ăшшĕпе ывăлĕ пек пĕр-пĕрне ыр суна уйăрăлчĕç.

Икĕ кунтан Н-ски полевой госпиталь палаткисем вырнаçнă çăра хыр вăрманне ула кушак тĕслĕ пĕчĕк автомобиль пырса кĕчĕ. Ун ăшĕнчен кăвак çўçлĕ генералпа çамрăк кăна капитан тухрĕç. Дежурнăй тухтăр вĕсене йывăр аманнисем выртакан палаткăна илсе кайрĕ.

— Куракин,—тесе чĕнчĕ тухтăр.— Сан патна хăнасем килчĕç!

— Мĕнле хăнасем пулччăр?—тĕлĕнчĕ Куракин.

— Эпир килтĕмĕр, Иван Васильич!—аякранах аллине тăсса пычĕ ун патне генерал. — Ну сывлăху мĕнле?

— Аптăрамасть, тўрленетĕп...—именнĕ пек пулчĕ Куракин.—Епле килсе тухрăр вара эсир кунта?

— Сан валли наградă илсе килтĕмĕр,—терĕ капитан.—Отечественнăй вăрçă орденĕ, Иван Васильич, пĕрремĕш степень!

— Ытла та-çке... пушшех именсе кайрĕ Куракин.—Мĕн тунă вара эп питех? Наградăшăн мар вĕт, ун чухнех каларăм сире... Хамăн кăмăл çавăн пек пулнипе... Наградăсене çамрăккисене ытларах парас пулать, вĕсем пирĕнтен маттуртарах пултараççĕ.

— Ну, тусăм, ку енчен пире ирĕк пар ентĕ, кам мĕнле наградăна тивĕçлине эпир хамăрах пĕлĕпĕр!—терĕ те ăна хирĕç генерал Куракинăн кăкри çине ылттăнлă орден вырнаçтарма тытăнчĕ,—Совет правительстви пирĕн геройсене пĕрне те манса хăвармасть... Ну, пĕтĕм чĕререн тав тăватăп сана!

Генерал Куракинăн сывă аллине тытса чăмăртарĕ.

—Часрах сывал та, каллех ман пата таврăн. Эп сана хăвна майлă ĕç тупса парăп. Канасса — кайран, тăшмана пĕтерсе тăксан канăпăр. Çапла-и?

— Тĕрĕс... Анчах та, те юрăхлă пулатăп-çке тин?

Куракинăн куçĕсем палăрмаллах шывланчĕç.

— Ан пăлхан, старик, тухтăр каларĕ ĕнтĕ мана—пĕрик уйăхран пĕтĕмпех виçене ларать, тет.

— Уншăн мар эп...—Куççульĕсене çăтрĕ Куракин. — Телейпе... чĕре тулса çитнипе... Епле чыс турăр эсир мана! Ĕмĕрте те шутламан кун çинчен...

— Тĕрĕссипе каласан, Иван Васильич, эпир те сана çакнашкал паттăр ĕç тума пултарать тесе шутламан!—терĕ ăна хирĕç капитан, кăмăллăн кулса илсе.—Лăпкă кăна çынччĕ эсĕ, сан сассу та илтĕнместчĕ, тепĕр чух эс пурри-çукки те сисĕнместчĕ...

— Шавлама юратмастăп çав эпĕ, тĕрĕс.

— Çапах та, каласа пар-ха ĕнтĕ халь, мĕнрен сасартăк çапăçăва кайма шут тытрăн эсĕ? Çине тăрса, тархасласах ыйтрăн вĕт-ха! Малтанах эп сана ярас та теменччĕ.

— Чăнах та, интереслĕ ку,—терĕ генерал та, Куракинăн уяр кун пек таса та çутă куçĕсенчен пăхса.—Нимĕçсен дзотне хуплаканни—ездовой Куракин, тесе пĕлтерсен, эп те самаях тĕлĕнтĕм.

— Вăл акă мĕншĕн пулчĕ,—лăпкăн пуçларĕ Куракин,—вуласа пăхăр çакна...

Çавăнтах пуç айĕнчи бумажникрен лутăркаса пĕтнĕ кăвак хут татки кăларса, комбата тыттарчĕ.

— Мĕн вара ку?

— Çыру. Ман кĕçĕн хĕрачан çыравĕ. Вулăр.

Начар кăрандашпа çырнă чалăш тĕлĕш саспаллисене аран уйăркаласа, капитан вула пуçларĕ.

— Савнă атте, сана чĕререн салам яратăп. Сан çырăва илсе эсĕ сыввине пĕлсен, питĕ савăнтăм, анчах çавăн чухнех аннене, тата Юркăпа Машăна аса илсе макăртăм. Вĕсене пурне те нимĕçсем вĕлерчĕç. Эп пĕчченех тăрса юлтăм та, Васса инке патĕнче пурăнатăп. Аннене нимĕçсем виçĕ хутчен пăшал тимĕрĕсемпе хĕнерĕç, мĕншĕн тесен анне пĕрмаях партизансене кĕпе çуса паратчĕ. Ун çинчен нимĕçсене хамăр ялти староста каласа панă. Кайран аннене хулари тĕрмене кайса хупрĕç, вара унта вăл питĕ асапланса вилнĕ, тет. Юркăпа Машăна хамăрăн чаçсем çитсе кĕрес умĕнхи кун улăхра персе пăрахнă. Вĕсем пăрупа сурăха нимĕçсем тытса пусасран вăрмана хăваласа кайса пытарма шутланă. Ун чухне нимĕçсем пирĕн ялта 21 çынна тата 63 ĕнене персе вĕлернĕ. Халь пире Хĕрлĕ Çар ирĕке кăларчĕ, хăрамастпăр ĕнтĕ текех. Анчах хĕлле епле пурăнассине пĕлместпĕр, мĕншĕн тесен нимĕçсем тухса тарнă чух яла тĕппипех çунтарса ячĕç. Тата тăлăххăн пурăнма питĕ кичем. Савнă атте, эсĕ халь нимĕçсене аннешĕн те, Юркăшăн та, Машăшăн та хытăн тавăр, вĕсене ытларах вĕлер! — Нимĕçсене пурне те çĕнтерсен вара киле таврăн та, пĕрле пурăнăпăр. Ман сана питĕ курас килет. Чуптăватăп. Санăн пĕртен-пĕр пĕчĕк хĕрў —Клава.

Капитан çырăва вуласа пĕтерчĕ те, ăна Куракина каялла пачĕ. Темиçе самант виççĕшĕнчен пĕри те нимĕн те чĕнмерĕç. Пĕчĕк хĕрача хăйĕн куççульĕпе çырнă сăмахсем пурин чĕрине те çав тери ыраттарчĕç...

— Ку çырăва эп шăпах наступлени пуçланас умĕн илтĕм, — терĕ Куракин. —Тўсе тăраймарăм вара, тўрех комбат патне кайрăм. Манăн епле пулсан та нимĕçсене тавăрас килчĕ...

— Тĕрĕс шут тунă, — ырларĕ ăна генерал. — Ним айăпсăр совет çыннисен, хĕрарăмсемпе ачасен кашни юн тумламĕшĕн тăшман юнне юханшыв пек юхтармалла, тетпĕр вĕт. Эс çавăн пек турăн та ĕнтĕ, çавăнпа мухтатпăр сана...

Кăшт тăрсан, генералпа капитан тухса кайрĕç.

— Каçар, Иван Васильевич, васкатпăр. Хĕрсех наступлени пырать, пирĕн çапăçу хирĕнче пулас пулать. А эсĕ кан халь, часрах сывалма тăрăш...—тесе хăварчĕç вĕсем.

Куракин чылайччен шухăша кайса выртрĕ.

—Епле хакла хураççĕ пирĕн этемме... Чăнах та çав, пирĕн пек çынсем урăх ниçта та çук-тăр!

Каçхине вăл сестрана чĕнсе илсе, хĕрачи патне ответлă çыру çыртарчĕ.

— Юратнă ачам, Клава! Эс пĕлтернисем манăн ăшчикке хытă çунтарчĕç. Сан çыруна илсен, тепĕр куннех, эс хушнă пек, çапăçура нимĕçсене хытă çĕмĕртĕм, нумайĕшне вĕлертĕм. Макăрниччен усси çук, хĕрĕм, çавăнпа та лăпланма тăрăш. Вăрçă пĕтсен эпир каллех телейлĕ пулса пурăнăпăр...

Ноябрь, 1943.

ДЕЙСТВУЮЩИ ÇАР.

---

*) Юлашки. Пуçламĕшĕ «Чăваш Коммунин» 31-мĕшĕпе 36-мĕш №№-сенче.

Киева юсаççĕ

Украина столицине юсама пĕтĕм çĕршыври ĕççынисем тăванла пулăшаççĕ. Нумаях пулмасть Киева Астраханьрен юсавпа монтаж бригади пынă. Вăл Киеври энергетиксене кирлĕ материалсемпе инструментсем илсе пынă. Сызраньрен, Орехово-Зуеваран çĕнĕ электрооборудовани пырать. Украинăри хуласемпе ялсенчен çамрăк строительсен пĕрремĕш ушкăнĕ—6.000 çын пынă. Вĕсем Киеври тĕп урама юсаççĕ. (ТАСС).

Казах çамрăкĕсен паха пуçарăвĕ

Казахстан столицинчи — Алма-Ата хулинчи—çамрăксем фронтовиксен ачисене шефа илнĕ. Çамрăк рабочисем канмалли икĕ кун производствăра ĕçленĕ. Ĕçлесе илнĕ 124.000 тенкĕ укçана ачасене пулăшмалли фонда хывнă.

Алма-Атари колхозниксен пуçарăвне Казахстанăн ытти хулисенчи çамрăксем те ырласа йышăннă. Фронтовиксен ачисене пулăшмалли фонда пĕтĕмпе 1.173 пин тенкĕ укçа пухăннă та ĕнтĕ. Фронтовиксен шкулта вĕренекен 300 ачи çав фондран кашни уйăхрах стипенди илсе тăраççĕ.

Февралĕн 20-мĕшĕнче республикăра «Шкул ачисен кунĕ» пулать. Хуласемпе ялсенчи çамрăксем çав кун фронтовиксен ачисене парнесем парама тумтир, атă-пушмак тата ытти япаласем те хатĕрлеççĕ. (ТАСС).

Ют çĕршывсенче

АМЕРИКА АВИАЦИЙĔ ГЕРМАНИЕ ТАПĂННИ

2.000 самолет ытла вĕçсе пынă

ЛОНДОН, февралĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăн Европăри стратегиллĕ типĕсçар вăйĕсен командованийĕн штабĕ çапла пĕлтернĕ: февралĕн 20-мĕшĕнче Америкăн йывăр бомбардировщикĕсем Германи истребительсем туса кăларакан пысăк авиаци завочĕсене тапăннă. Ку хутĕнче тапăнни вăрçă пуçланнăранпа кăнтăрлахи вăхăтра чи вăйлă тапăнни пулнă.

ЛОНДОН, февралĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонра официально çапла пĕлтернĕ: февралĕн 20-мĕшĕнче кăнтăрла Америка бомбардировщикĕсем Лейпцига тапăннă. Америкăн сывлăш-çарĕн 8-мĕш корпусĕнчи йывăр бомбардировщикĕсен дивизийĕсем Лейпцигри авиаци завочĕсемсĕр пуçне тата Гетри, Бернбургри, Брауншвейгри авиаци завочĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Кунсăр пуçне тата Тутоври, Ошерслебенри çар сооруженийĕсене тата Германири ытти çар объекчĕсене те тапăннă.

Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, сывлăшри çав операцисене Америкăн «Вĕçекен крепость» тата «Либерейтор» йышши 2.000 бомбардировщикĕ тата истребительсем хутшăннă. Америка авиацийĕн командующийĕ Арнольд генерал-майор каланă тăрăх, çак хутĕнче тапăнни вăл пĕрлешўллĕ нацисен сывлăшра тунă чи пысăк операцийĕ пулса тăнă. Арнольд каланă тăрăх, Германин 100 истребительне ытла персе ўкернĕ е сиенленĕ. Союзниксен истребителĕсем кăна тăшманăн 61 самолетне пĕтерсе тăкнă. Çав операцирен союзниксен 22 бомбардировщикĕ тата 4 истребителĕ таврăнман.

ЛОНДОН, февралĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăн Европăри стратегиллĕ сывлăш-çар вăйĕсен командованийĕн штабĕ çапла пĕлтерет: февралĕн 21-мĕшĕнче Америкăн 8-мĕш авиаци корпусĕн йывăр бомбардировщикĕсен соединенийĕсем, Англи истребителĕсемпе пĕрле пырса, Çурçĕр тата Хĕвеланăç Германири çар сооруженийĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Çав ĕçсене хутшăннă самолетсен хисепĕ февралĕн 20-мĕшĕнче вăйлăн тапăннă чухнехи чухлех.

ЛОНДОН, февралĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Американецсен Европăри командованийĕн штабĕ çапла пĕлтерет: февралĕн 22-мĕшĕнче Америкăн йывăр бомбардировщикĕсен соединенийĕсем, пĕрремĕш хут Англири тата Италири аэродромсенчен пĕр харăс вĕçсе тухса, тăшман территорине тапăннă. Бернберг хулинчи «Юнкерс—88» йышши самолетсем пухакан завода ăнăçлăн атакăланă, унсăр пуçне тата Ошерслебенри тата Гальберштадтри фюзеляжсен пайĕсене тăвакан заводсене тапăннă. Регенсбургри самолетсем пухакан завода тата «Мессершмитт—109» йышши самолетсен фюзеляжĕсен пайĕсене тăвакан заводсене атакăланă. Бомбардировщиксен соединенийĕсене Америкăн истребительнăй авиацийĕн, доминионсен авиацийĕн тата союзниксен экспедици фирмисен самолечĕсен пысăк соединенийĕсем хўтĕлесе пынă. Унсăр пуçне Вăтасĕр тата Кăнтăр Германири аэродромсемпе ытти çар объекчĕсем çине те бомбăсем пăрахнă.

ЛОНДОН, февралĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонра официально çапла пĕлтернĕ: февралĕн 22-мĕшĕнче Америка самолечĕсем тăшманăн 133 истребительне пĕтерсе тăкнă.

АНГЛИ БОМБАРДИРОВЩИКĔСЕМ ШТУТГАРДА ТАТА МЮНХЕНА ТАПĂННИ.

ЛОНДОН, февралĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Официально çапла пĕлтернĕ: февралĕн 21-мĕшĕнче Англи бомбардировщикĕсен пысăк соединенийĕсем Германие тапăннă. Штутгарта пуринчен те вăйлăрах тапăннă. Çавăн пекех тата Мюнхен çине тата оккупациленĕ территорисенчи объектсем çине бомбăсем пăрахнă.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔН ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, февралĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Официально çапла пĕлтереççĕ: Америка бомбардировщикĕсем Германие февралĕн 20-мĕшĕнче тапăннă чухне тăшманăн 126 самолетне персе ўкернĕ.

Германин Балтика тинĕс хĕрринче ларакан Ростокри çар сооруженийĕсем çине те бомбăсем пăрахнă.

Ĕнер Германин авиаци завочĕсене йывăр бомбардировщиксен питĕ пысăк соединенийĕсем тапăннă. Çурçĕр-хĕвеланăç Германири чи паха аэродромсем çине тата юсав авиабазисем çине, Брауншвейгрипе Ганноверти икĕ авиаци завочĕ çине, Брамшри, Лингенри тата ытти чылай вырăнсенчи аэродромсем çине бомбăсем пăрахнă. Сывлăшри çапăçусенче тăшманăн 33 самолетне персе ўкернĕ.

АНГЛИЕ ТАПĂННИ

ЛОНДОН, февралĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонра официально çапла пĕлтернĕ: февралĕн 23-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле тăшман авиацийĕ Лондон çинче, хĕвелтухăç тата кăнтăр-хĕвелтухăç Англин районĕсем çинче, çавăн пекех тата Вăтаçĕрти графствăсем çинче активлăн кĕрешнĕ. Нумай тĕлте бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем сиен тунă. Вилнисемпе аманнисем пур. Нимĕçсен сахалтан та 6 самолетне персе ўкернĕ.

Ответлă редакторăн заместителĕ А. А. ЭСХЕЛЬ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского. 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, секретарьпе заместителĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

ПТ 00565 Типографи №1, Управлени полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. 6. 59X42 п. л. Тираж 13.400 экз.